Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

70 (7710) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи сентябрĕн (авăн) 2-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

### Ĕнер шкулсенче пĕрремĕш шăнкăрав янăрарĕ



*Çапла пĕр тĕллевлĕн пăхаççĕ ачасен куçĕсем хăйсен вĕрентекенĕсем çине çуллахи каникул хыççăн. Сăн ӳкерчĕкре эсир Муркаш лицейĕнче 11-мĕш класра вĕренекенсене куратăр. Иртнĕ çул илнĕ пĕлӳпе вĕсем хăйсен кĕçĕнрех тусĕсенчен – кăçал 10-мĕш класа вĕренме кĕнисенчен – самай уйрăлса тăраççĕ. Апла пулин те вĕсем кĕçĕннисене пулăшма хатĕр – ку вăл лицей пурнăçĕн тĕп шăнăрĕ.*

*Туслă коллективра пĕлӳ пухсах иртнĕ çул кунтан вĕренсе тухнă 44 çамрăкран 39-шĕ – аслă вĕренӳ заведенийĕсене, 5-шĕ ятарлă пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕнĕ.*

*Вунă çул каялла уçăлнă лицей кăçал тăххăрмĕш кăларăм турĕ. Кунтан вĕренсе тухнисем кашниех пурнăçра хăйсен вырăнне тупнă. Çапах кунта вĕренме килекенсен хастарлăхĕ пурри ырă шанчăк çуратать.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Пĕрремĕш ĕмĕтсем те, ыттисем те çитсе пыччăр

Ĕнер пур çĕрте те çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ. Пирĕн районта партăсем хушшине пурĕ 4005 ача ларчĕ. Çав шутран 362-шĕ шкул алăкне пĕрремĕш хут уçрĕ. Муркашри вăтам шкулта вара çĕнĕ вĕренӳ çулне халалланă 125-мĕш хаваслă линейка иртрĕ. Ноябрь уйăхĕнче шăпах çакăн чухлĕ çул пулать ăна. Çак хушăра миçе çĕр ачана пурнăç çулĕ çине ăсатмарĕç пулĕ кунтан. Юбилейлă вĕренӳ çулĕнче вара пĕтĕмпе 700 ача пĕлӳ тĕнчине çула тухать. Вĕсенчен 72-шĕ – 1 класра вĕренекенсем. Шкул директорĕ В.В. Ялушкин ачасене, ашшĕ-амăшĕсене, вĕрентекенсене пĕлӳ кунĕпе саламланă май иртнĕ çулхи вĕренӳ çулĕнче те ачасем пахаллăхлă пĕлӳ илнине палăртрĕ. Владислав Валентинович пурне те лайăх паллăсемпе вĕренме ырлăх-сывлăх сунчĕ.

Чăннипех те пăлханулла самант вăл – сентябрĕн 1-мĕшĕ. Ачисенчен ытла ашшĕ-амăшĕсем хумханаçĕ пулĕ: хăйсем çĕнĕрен партăсем хушшине лараççĕ тейĕн. Район пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн сăмахĕсем çитчĕрех кашни ача патне:

–Çак кун 70 çул каялла иккĕмĕш тĕнче вăрçи пуçланнă. Сире ку шăпа нихăш енчен те килсе ан çаптăр. Мирлĕ тӳпе айĕнче телейлĕ пурнăçпа пурăнмалла, тарăн пĕлӳ илмелле пултăр, – терĕ Юрий Александрович.

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче маттур пулнă ачасене хăйĕн ятĕнчен стипенди, вĕренекенсене Хисеп грамотисемпе саламларĕ.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов вара вĕренекенсене çирĕп сывлăх сунчĕ:

– Çирĕп сывлăхлă пулсан çеç вĕренӳре малта пыма пулать, – терĕ вăл.

Муркаш шкулĕнче вĕренекенсем районта иртекен тĕрлĕрен конкурссенче те хастар. Акă иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Муркаш ял тăрăхĕ «Мухтанатăп санпа, тăван ял» конкурс ирттерчĕ. Унта вĕренекенсем хастар хутшăнчĕç. Çавăнпа та унăн çĕнтерӳçисене Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕн Н.И. Никитинăн аллинчен дипломсем илме кăмăллă пулчĕ линейкăра. Николай Иванович кăçал та вĕренекенсен тăван ене тирпей-илем кĕртес ĕçе хаваспах хутшăнасса шанни çинчен пĕлтерчĕ.

Çу каçипе кĕнекепе туслă пулнисене вара ял тăрăхĕсем хушшинчи централизациленĕ библиотека ертӳçи Т.Е. Королькова кĕнекесем парса чысларĕ. Саламлакансем те, парнесене тивĕçнисем те чылайăн пулчĕç çак кун. Чи хаклă парне илекенсем вара 1 класра вĕренекенсем пулчĕç. Актовăй залра йĕркеленĕ уявра кашниех кĕнекене тивĕçрĕ. Унччен вара вĕсем пуçтарăннисем умĕнче тăрăшса вĕренме сăмах пачĕç. Пĕрремĕш шăнкăрава та пĕрремĕшсем пачĕç. Эппин, пĕрремĕшсен пĕрремĕш ĕмĕчĕсем те, ыттисем те çитсех пычăр.

**Л. ПАВЛОВА.**

### Райадминистрацире

## Тăрăшулăхпа пултарулăхшăн

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ, «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» акционерсен уçă обществи ыйтнисене тивĕçтерсе, çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Районти тата республикăри ăмăртусене активлă хутшăннăшăн:

– **Вячеслав Владимирович КРЫЛОВА**, Юнкă шкулĕн физкультура учительне;

– **Марина Валерьяновна ОВЧИННИКОВАНА**, Муркаш районĕнчи хушма вĕрентĕвĕн ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн çăмăл атлетика енĕпе тренер-преподавательне;

– **Надежда Гронитовна ПАВЛОВАНА**, район администрацийĕн информаципе тивĕçтерекен пайĕн 1-мĕш разрядлă аслă специалистне;

– **Олег Артурович СЮТРУКОВА**, Муркаш районĕнчи хушма вĕрентĕвĕн ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн бокс енĕпе тренер-преподавательне.

2. Строительствăра нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Владислав Валерианович НИКОЛАЕВА**, «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» акционерсен уçă обществин строительство участокĕн столярне.

### Çамрăксен ыйтăвĕсемпе

## Пултаруллисен стипенди илме май пур

Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров хăйĕн йышăнăвĕпе пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ пултарулăхпа уйрăмах палăрса тăракан çамрăксемпе студентсене – 14 çул тултарнисенчен пуçласа 30 çулчченхисене – ятарлă стипенди парса хавхалантарать.

Çак стипендие илес текенсем хушшинче вĕренӳре ăнăçлă ĕлкĕрсе пыракансем, бизнес-проект хатĕрлессипе, наука, пултарулăх, производство, ертсе пырас ĕç енĕпе çитĕнӳ тăвакансем пулма пултараççĕ.

Пирĕн районта та çакнашкаллисем çук мар. Çавăнпа та сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 1-мĕшĕччен пур предприятисемпе организацисен, учрежденисен тата тĕрлĕ органсен хăйсен кандидатурине тăратма май пур. Тĕплĕнрех район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕнче ыйтса пĕлме пултаратăр.

**Е. ЧЕРНОВА,**
**районти вĕрентӳ пайĕн çамрăксемпе ĕçлекен специалисчĕ.**

### Ыйту – хурав

## 2010 çулхи халăх çыравĕ

**– Çитес çулхи Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне ирттерме каякан укçа-тенкĕ тăкакĕсене кам саплаштарать-ха?**

– Халăх çыравне хатĕрленсе ирттерме, унăн итогĕсене пĕтĕмлетсе пичетлесе кăларма каякан пур тăкака та федераллă бюджет шучĕпе саплаштараççĕ. Çырав ирттерекенсем валли пӳлĕмсем тупса парасси, çыхăнупа тата автотранспортпа тивĕçтересси Раççей Федерацийĕн законодательствипе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн субъекчĕсемпе вырăнти бюджетсем шучĕпе пулать, çавна валли каякан укçа-тенкĕне федераллă бюджетран уйăраççĕ.

Федераллă бюджетран укçа-тенкĕ уйăрмалли йĕркене Раççей Федерацийĕн Правительстви палăртать.

**З. ВИНОГРАДОВА,**
**Чувашстатăн предприятисен статистикин Муркаш районĕнчи пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ.**

### Кам мĕнле вăрлăх акать?

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕМ КĔР АКИНЧЕ МĔНЛЕ ВĂРЛĂХПА УСĂ КУРНИНЕ КĂТАРТНИ**
**(августăн 27-мĕшĕ тĕлне, центнерпа)**
**Колонкăсенче: 1.Тĕрĕслеттернĕ. 2. Кондициллĕ вăрлăх.**

| | 1 | 2 | | 1 | 2 |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 759 | 759 | «Передовик» | 710 | 422 |
| «Волга» | – | – | «Свобода» | 2005 | 1835 |
| «Восток» | – | – | «Агросоюз» | 300 | – |
| «Герой» | 1248 | 868 | Суворов яч. хис. | 2320 | 2320 |
| Ильич яч. хис. | 900 | 900 | «Рассвет» | – | – |
| Ленин яч. хис. | – | – | «Ударник» | 3774 | 3634 |
| «Лидер» | – | – | «Хлебороб» | 268 | 268 |
| Мичурин яч. хис. | 820 | – | Чапаев яч. хис. | 800 | 200 |
| «Моргаушская» | 720 | 720 | Чкалов яч. хис. | 1030 | 1030 |
| «Оринино» | 1710 | 1710 | **РАЙОНĔПЕ** | **19804** | **16576** |

## Район уй-хирĕсенче

Чылай хуçалăхра «хир карапĕсем» вырман юлашки каçалăкĕсене тăваççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне районĕпе 12608 гектартан 11 пин ытла гектар çинчи тыр-пула пухса кĕртнĕ те ĕнтĕ. Вырма ĕçĕсене 9 пĕрлешӳллĕ хуçалăхпа 4 хресчен (фермер) хуçалăхĕнче вĕçленĕ.

Ĕнерхи куна çĕнĕ тырăн вăтам тухăçĕ районĕпе гектар пуçне 25,1 центнерпа танлашать. Уйрăмах пысăк тухăçлисем: «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики (50 центнер), Ильич яч. хис. (35,2 центнер), «Ударник» (33,9 центнер), Чкалов яч. хис. (31,7 центнер), «Восток» (29,7 центнер) хуçалăхсем.

«Хир карапĕсем» хыççăнах улăм пуçтарăнса пырать. Ĕнерхи кун тĕлне вырнă пусăсенчен 9 пин гектарне улăмран тасатнă.

Районĕпе 1300 гектара яхăн çĕртме сухи тунă.

Хуçалăхсем пĕтĕмпе 4 пин гектар ытла кĕрхи культурăсем акнă. Ку ĕç малалла пырать. Кĕрхи культурăсем акассине «Оринино» хуçалăх планпа пăхнинчен ытларах пурнăçланă (414 гектар е 118 процент).

Районĕпе 150 гектар ытла çĕр улми кăларнă. Ку ĕç «Ударник» хуçалăхра кал-кал пырать.

Çĕр улмин вăтам тухăçĕ хальлĕхе 164 центнерпа танлашать.

### Социализмла Ĕç Геройĕ – 80 çулта

## «Ĕçре туптаннă телей»

Çак кунсенче пирĕн ентеш, Социализмла Ĕç Геройĕ Ольга Федоровна Федорова 80 çул тултарать. Çавна халалласа районти историпе краеведени музейĕнче сентябрĕн 3-мĕшĕнче «çавра сĕтел» ирттерме палăртнă. Вăл 13 сехетре пуçланать. Унта ял хуçалăхĕн, социаллă сферăн, обществăлла апатлану организацийĕсен специалисчĕсемпе ветеранĕсем, Муркаш тата Çатракасси шкулĕсенче вĕренекенсем, район администрацийĕн представителĕсем, ял хуçалăх предприятийĕсен машинăпа ĕне сăвакан операторĕсем хутшăнаççĕ.

Малтанах музейра экскурси иртет. Кайран Социализмла Ĕç Геройне О.Ф. Федорована халалланă «Ĕçре туптаннă телей» тематика композицийĕпе паллашма май пулĕ. Электронлă презентаци те пулать. Ку мероприятие Муркаш район пуçлăхĕ те хутшăнать. Пултаруллă çынна тав сăмахĕсем Муркаш райповĕн председателĕ Б.В. Андреев, Муркаш тата Çатракасси ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем Н.И. Никитин тата Ю.А. Кожевников тата ыттисем калаççĕ. Муркаш шкулĕнче вĕренекенсем «Çын ĕçпе аслă» ятпа литмонтаж кăтартĕç, Çатракасси шкулĕнче вĕренекенсем хăйсен Çĕр ĕçченĕн çулталăкне халалланă сочиненийĕсен йĕркисене вуласа парĕç. Кунпа пĕрлех юбилей мероприятине хутшăнакансене юрă-ташă номерĕсем те кĕтеççĕ.

**А. АНДРЕЕВА,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ.**

### Саламлатпăр



Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çатракасси ялĕнче пурăнакан юратнă аннене, хунямана, асаннене тата кукамая, ырă кăмăллă тăхлачăна тата ăш пиллĕ тăванăмăра – **Зоя Андреевна ПАВЛОВАНА** 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Çамрăклах мăшăрсăр юлтăн пулсан та икĕ хĕрӳпе икĕ ывăлна анлă пурнăç çулĕ çине тĕрĕс-тĕкел кăлартăн, ялта ят ямарăн, тăванусенчен сивĕнмерĕн. Турă пана сывлăхпа сана татах нумай çул пирĕнпе юнашар пурăнма, ĕçӳпе савăнтарма, мăнукусене утьăкка сиктерме çирĕп вăй-хал сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: икĕ ывăлĕпе кинĕ, икĕ хĕрĕпе кĕрĕвĕсем, 6 мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**



Юратнă аннене, хисеплĕ хунямана, кукамая, йăмăкăма – Ятман ялĕнче пурăнакан **Ольга Петровна СТЕПАНОВАНА** 70 çул тултарнă ятпа тата мăнукне – Дианăна çуралнă кунĕ ячĕпе чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Кунçулусем вăрăм та телейлĕ, сывлăхусем çирĕп пулччăр. Инкек-сикек сирĕн çывăхăра ан пытăр. Эпир вара сирĕншĕн, хамăрăн чи çывăх çынсемшĕн, ялан савăнатпăр, сире юрататпăр, çĕр çинчи мĕн пур ырлăха сунатпăр.

**Салампа: хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, çывăх тăван-хурăнташĕсем.**